www.tavanen.ru

Тăван Ен

плюс Причебоксарье

№35 (10587-10588) ● СЕНТЯБРĔН 8-МĔШĔ ● 2017 ● ЭРНЕКУНСЕРЕН ТУХАТЬ

Хакĕ ирĕклĕ

Хаçат 1932-мĕш çулхи июлĕн 27-мĕшĕнчен тухса тăрать

Çапла çуралнă хаçат гимнĕ...

Газ плитине ыталаса макăртăм
ПАТШАЛĂХ ПУЛĂШĂВĔ → 2

Евровидени юрри чăвашла янăрать
ДЕЛА МЕСТНЫЕ → 5

Пĕчĕк батарейкăн пысăк сиенĕ
ЫЙТУ-ХУРАВ → 10

• ĔÇЛĔ ÇУЛ ÇӲРЕВ

Çĕньял-Покровски шкулĕнчи кадет класĕпе – асăнмалăх сăн ӳкерчĕк

Е.Дадюкова сăн ӳкерчĕкĕ

Федераци хыснинчен – район бюджетне

Укçа-тенке мĕнле усă курни — куç умĕнче

Ĕнер Мăн Кивпулăх ялĕнчи икĕ çул каялла уçнă клуба РФ Патшалăх Думин комитечĕн членĕ Алена Аршинова килсе çитрĕ. Унпа пĕрле Шупашкар район пуçлăхĕ Андрей Николаев тата Çĕньял-Покровски ял тăрăх пуçлăхĕ Рудольф Васильев пулчĕç.

Ял тăрăх пуçлăхĕн сăмахĕсем тăрăх, 150 тăваткал метрлă çĕнĕ çуртра библиотека тата клуб вырнаçнă. Вăл тăватă ял-сала – Янту, Мăн Кивпулăх, Хосантай, Вашук – çыннисене йышăнать. Çĕнĕ çурта çĕклеме 2,1 млн тенкĕ тăкакланă, вĕсенчен пĕр млн тенке Çĕньял-Покровски ял тăрăхне 2014 çулхи ĕçсен пĕтĕмлетĕвĕсене кура панă. Алена Игоревна клубра мероприятисем мĕнле тăтăшлăхпа иртни пирки кăсăкланчĕ. Рудольф Васильев кĕркунне тата хĕлле вĕсен шучĕ ӳсессине палăртрĕ. Депутат клуба тата библиотекăна пăхса çаврăнчĕ.

Алена Аршинова çавăн пекех Пархикассинче Çĕньял-Покровски шкулне те çитсе курчĕ. Кунта 198 ача вĕренет, иртнĕ çултипе танлаштарсан 20 ача ытларах парта хушшине ларнă. 2012 çулта 4-мĕш класран пĕрремĕш кадет ушкăнĕ хатĕрленĕ. Кăçал вĕсем шкул пĕтерне. 6-мĕш кадет класĕнче 21 ача пĕлӳ пухать. Шкул коллективĕпе иртнĕ тĕл пулăва райадминистраци пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Владимир Димитриев та хутшăнчĕ. Педагогсене Патшалăх Думин депутачĕ Чăваш Республикинче шкулсем тăвас плансем çинчен каласа пачĕ. Тĕп хулари Гладков урамĕнчи шкула хута янă, Çĕрпӳ районĕнче вĕрентӳ учрежденийĕ черет кĕтет. Шкулсен строительстви валли кăçал федераци бюджетĕнчен 25 млрд тенкĕ уйăрнă. Алена Игоревна Чăваш Республикинчи аслă пĕлӳ паракан тытăмта федераци укçи-тенкипе усă курнине палăртрĕ, И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче инжиниринг центрĕ, лабораятори йĕркеленĕ. Педагогсене тĕрлĕ конкурса хутшăнма, грантсем илме проектсем хатĕрлеме сĕнчĕ депутат. Район пуçлăхĕ Андрей Николаев педагогсене çĕнĕ вĕренӳ çулĕпе саламларĕ, ăнăçу сунчĕ. Алена Аршинова ăна предпринимательлĕхе, вырăнти хăй тытăмлăха аталантарма тӳпе хывнăшăн Тав çырăвĕпе чысларĕ. Шкулсенче психологсем çитменни, «Учитель чысне тата тивĕçлĕхне хӳтĕлесси çинчен» закона йышăнасси, çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх пулăшăвĕшĕн тӳлемелли компенсаци виçин çителĕксĕрлĕхĕ – педагогсем тĕл пулу вăхăтĕнче çак ыйтусене хускатрĕç.

Виçĕм кунах Алена Аршинова «Изва» ООО ĕçтӳçисемпе тĕл пулчĕ. Заводăн чысмухтав хăмипе, производствăпа паллашрĕ, предприяти коллективĕпе тĕл пулу иртерчĕ.

Ишлей ял библиотекинче РФ Патшалăх Думин депутачĕ граждансене харпăр-хăй ыйтăвĕпе йышăнчĕ.

● РЕСПУБЛИКĂРА

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ ИННОВАЦИ, ПУЛТАРУЛĂХ ТАТА ĂС-ХАКĂЛ ПУЯНЛĂХНЕ ӲСТЕРЕССИНЕ ХАВХАЛАНТАРАССИПЕ ÇЫХĂННĂ хушма мерăсем пирки калакан Хушупа килĕшӳллĕн Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев регионри шкулсене Чăваш Республикин Пуçлăхĕн 200-шер пин тенкĕлĕх гранчĕсене уйăрса пама йышăну тунă. Çак пулăшăва кăçал районти икĕ вĕрентӳ учрежденийĕ тивĕçĕ. Кӳкеçри «Пӳрнеске» ача сачĕ тата Янăшри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул.

Ача сачĕ çакăн пек грантпа иккĕмĕш хут усă курать. 2010 çулта ун шайĕнче коллектив квалификацие ӳстермелли курспа Питĕрте пулнă. Ку хутĕнче вара, ача сачĕн заведующийĕ Наталия Романова пĕлтернĕ тăрăх, ачасене хăйăр графикин техникипе вĕрентессине йĕркелесе ярасшăн. Проекторсене, экрансене, интерактивлă хăмасене вара кунта унччен туяннă.

СĂМАХ МАЙ

Кӳкеçри «Пӳрнеске» ача сачĕ поселокран, Çатракассинчен, Иккассинчен, Хĕрлĕ Çыртан, Уйкассинчен 330 ачана йышăнать.

ПОЧТА УЙРĂМĔСЕНЧЕ
Республикăри пур районта та çырăнтараççĕ
377 тенкĕ 82 пус

АЛЬТЕРНАТИВА ÇЫРĂНТАРĂВĔ
Редакцире илсе тăмалла
ЭЛЕКТРОНЛĂ ÇЫРĂНТАРУ
260 тенкĕ

ИШЛЕЙ РАЙПОВĔН ЛАВККИСЕНЧЕ
Шупашкар районĕнче вырнаçнă Ишлей райповĕн лавккисенче çырăнса илсе тăмалла
«ЧĂВАШПИЧЕТ» КИОСКĔСЕНЧЕ
300 тенкĕ

Çырăнтару индексĕ 54820

«Тăван Енсĕр» тăвансăр пекех

Алексей ВИНОГРАДОВ, Сархурăн

www.tavanen.ru Сентябрь 8 - 14, 2017 Тăван Ен № 35 (10587-10588)

Алена АРШИНОВА, РФ Патшалăх Думин депутачĕ – Вĕрентÿ тата ăслăлăх комитечĕн членĕ:

– Педагогсене эпĕ питĕ хисеплетĕп. Хăйсен шкулĕсенче ачасене кĕтсе илсе пĕлÿ пама вĕсем хăтлă условисем тăвассишĕн тăрăшаççĕ. Учителĕн статусне ÿстермеллипе те килĕшетĕп. Вĕрентÿ тытăмне укçатенкĕпе пуянлатма эпир май килнине пĕтĕмпех тăватпăр. Инновациллĕ ĕç-хĕлшĕн федераци министерстви грантсем çирĕплетнĕ. Вĕсене выляса илмелле.

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ÇАР КОМИССАРИАЧĔ ÇАК КУНСЕНЧЕ МУНИЦИПАЛИТЕТ ЯЛ ТĂРĂХĔСЕНЧИ, предприятисенчи тата организацисенчи çар учетне тĕрĕслерĕ. Шупашкар тата Сĕнтĕрвăрри районĕсенчи çар комиссариачĕн комиссарĕ Александр Кочуров каланă тăрăх, комисси муниципалитетăн РФ хĕçпăшаллă вăйĕсене техникăпа запасри çынсен тĕрлĕ лару-тăрури хатĕрлĕхĕ тĕлĕшĕнчен пăхать. Çакăн умĕн çар техникине тăратма хушнă предприятисене те, граждансене те маларах каласа пĕлтереççĕ. Кун-

сăр пуçне çар комиссариачĕ ШĔМпе, МЧС ведомствинчи службăсемпе тата ыттисемпе мĕнле хутшăнса ĕçленине те сăнать.

«Кун пек тĕрĕслев çулталăкра пĕрре пулать. Граждансене хыпарласан вĕсен палăртнă адреспа пымалла. «Чебоксарскагропромтехсервис» ЗАОра техникăна тĕрĕслеме пункт йĕркеленĕ, запасрисене Кÿкеçри 1-мĕш шкулта йышăннă. Унта планпа палăртнă занятисем иртеççĕ. Чĕннисене вара çемйи çинчен ыйтса пĕлсен килĕсене ярассĕ», – ăнлантарать Александр Алексеевич. Тĕрĕслеве кĕтнĕ пекех 100 çынна яхăн хутшăннă. ■

● РЕСПУБЛИКĂРА

Сентябрĕн 15-17-мĕшĕсенче Атăл леш енче, Шупашкарти сывлăха çирĕплетмелли «Волна» ача-пăча лагерĕнче республикăри çамрăк экологсен тата краеведсен слечĕ иртмелле. Экологсен слетĕнче республика хулисенчи, районсенчи общество пĕрлешĕвĕсен, вĕрентÿ учрежденийĕсен командисем хутшăнма пултараççĕ: 5-11-мĕш классенче вĕренекен 8 ача тата пĕр ертÿçĕ. Краеведсен слетĕнче вĕрентÿ учрежденийĕсенчи педагогсенчен тата вĕренекенсенчен, историпе краеведени тата шыравпа тĕпчев программине пурнăçа кĕртекен общество организацийĕсен представителĕсенчен тăракан командăсене кĕтеççĕ. Ушкăнра 12-18 çулти 6 çын тата пĕр ертÿçĕ пулмалла. ■

● РАЙОНТА

«РОСТЕНДЕР» САЙТРА ШУПАШКАР РАЙОНĔНЧЕ ÇУЛСЕМ ЮСАМА ТЕНДЕРСЕМ ВЫРНАÇТАРНĂ. Çырмапуç ял тăрăх администрацийĕ Кÿкеç-Иккасси-Платка автоçултан пăрăнсан Шаккăл ялĕнчи Полевая урамри 5-мĕш çурт умĕнчен каçса каякан вырăн таран çула юсама конкурс ирттересси пирки пĕлтерÿ вырнаçтарнă. Юсав ĕçĕсене ирттерме 256393 тенкĕ кирлĕ. Заявкăсене сентябрĕн 12-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

Çĕнъял ял тăрăх администрацийĕ Илпеш тата Якутар ялĕсенче çулсен пĕр пайне юсама планланă. Контрактăн пуçламăш хакĕ 681019 тенкĕ. Заявкăсене сентябрĕн 8-мĕшĕччен йышăнаççĕ. ■

АВГУСТ УЙĂХĔН ВĔÇĔНЧЕ ÇĔНЪЯЛ ЧУРАЧĂК ЯЛĔНЧЕ ХАЛĂХ ПУЛТАРУЛĂХĔН ФЕСТИВАЛЬ-КОНКУРСĔ ИРТНĔ. Жюри пĕтĕмлетĕвĕсем тăрăх Олкашри ял клубĕ 1-мĕш вырăн йышăннă, Мускаринкассинчи ял клубĕ – 2-мĕш вырăн, Ишлейри пултарулăх çурчĕ – 3-мĕш. Пултарулăх коллективĕсем сцена çинче юрă-ташăра ăмăртнă вăхăтра спорт площадкинче волейболл вăйии пынă. ■

ТЕ СĔНЕТ

Иакиф монах ас тăвăмне хисеплесе

Никита Бичурин ăсчах, востоковед çуралнăранпа 240 çул çитнĕ тĕле Кÿкеçри «Бичурин тата паянхи самана» музейра «Ытарайми Пекин» фотокурав ĕçлеме пуçларĕ. Иакинф монах шăпах Китайăн тĕп хулинче 14 çул пурăннă тата тĕпчев ĕçĕсемпе кăсăкланнă. Çакăн пек майпа вăл тухăçа çул уçнă. Фотокурав валли материалсене ентеш, Самуккасси çынни Александр Никитин академик яланлăхах панă.

Никита Бичурина халалланă уяв паян Чăваш патшалăх педагогика университетĕнче «Никита Бичуринăн наукăри пултарулăхĕпе общество ĕçĕ-хĕлĕнчи цивилизацисен диалогĕ» тĕнче шайĕнчи наукăпа практика конференцийĕпе пуçланать. Кăнтăрла иртсен хăнасем Кÿкеçри Бичурин садĕнче Иакинф атте палăкĕ умне чечексем хурĕç. Шăматкун вара, ирхи вунă сехетре, историре паллă йĕр хăварнă ентеш пултарулăхне сума сăвакансене валли поселокри тĕп культура çуртĕнче уяв мероприятийĕ пуçланать. Ун хыççăн вĕсене Никита Бичуринăн тăван ялĕнче Типнерте кĕтеççĕ. Кунти ас тăвăм чулĕ çине чечексем хунă хыççăн хăнасен çулĕ Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Бичурино ялне выртĕ. ■

Баракран – çĕнĕ хваттере

Кÿкеçсен савăнăçĕ пысăк

А. Тихонова сăн ÿкерчĕкĕсем

• ПАТШАЛĂХ ПУЛĂШĂВĔ

Кÿкеçри Шоссейная урамри 25-мĕш çуртра пурăнакансен ĕмĕчĕ тинех пурнăçланчĕ. Тинех вĕсем çĕнĕ хваттер уççиллĕ пулчĕç. Хăйсен унччченхи адресне Геологическая урамри 7-мĕш çуртрипе ылмаштарĕç.

Вăл, 18 хваттерлĕ тата виçĕ хутлăскер, «2013-2017 çулсенче Чăваш Республикинче вырнаçнă авариллĕ çурт-йĕр фондĕнчен граждансене куçарасси» тĕллевлĕ республика программин IV тапхăрĕпе килĕшÿллĕн çĕкленчĕ. Райадминистраци пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Владимир Димитриев строительство ĕçĕсене куллен вырăна çитсе сăнаса тăчĕ, подрядчиксене васкатрĕ те. Халĕ вара 50 çын – пурĕ 17 çемье тата пĕр тăлăх ача – çĕнĕ «тăваткал метрсемлĕ» пулчĕ. Чылай çул кĕтнĕ самант тинех çитнишĕн савăннине пытармарĕç вĕсем. Хăтлă хваттерлĕ пуласси тек ĕмĕтре çеç маррине ĕненме хăранă евĕр, çĕнĕ çурт çине куç илмесĕр пăхрĕç.

Баракран çĕнĕ çурта пурăнма куçакансен савăнăçне пайлама Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн председателĕн çумĕ – бюджет, финанс тата налог комитечĕн председателĕ Альбина Егорова, ЧР строительство, архитектура тата çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх министрĕн çумĕ – Республикăн тĕп архитекторĕ Александр Шевлягин, Шупашкар район пуçлăхĕ Андрей Николаев, райадминистраци пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Владимир Димитриев, Кÿкеç ял тăрăх пуçлăхĕ Владимир Вершин, «Санетехсервис-4» ООО фирма-застройщик директорĕ Сергей Надеждин çитрĕç.

Андрей Николаев строительсем объекта кĕске вăхăтра хăпартнине, ĕçсен пахалăхне палăртрĕ. Владимир Димитриев пĕлтĕр кĕркунне кивĕ тата авариллĕ çуртра пурăнакансем ун патне пурăнмалли условисене лайăхлатма пулăшмашкăн ыйтма пынине аса илчĕ. «Вăл вăхăтри тата паянхи кăмăлтуйăм палăрмалла улшăннă сирĕн, çакă ĕмĕт пурнăçланнипе çыхăннă ахăртнех», – хушса хучĕ вăл.

Альбина Егорова çынсене авариллĕ çурт-йĕртен куçарас программа Раççей Президенчĕ Владимир Путин пуçарнипе пурнăçланни, республика правительстви тата муниципалитетсем пĕр-пĕринпе тачă çыхăнса ĕçленипе пулса пыни çинчен каларĕ. Çынсене туслăн пурăнма, çуртри подъезда, ун умĕнчи территорие те тирпейлĕхре тытма сĕнчĕ вăл. Строительсене объекта хăвăрт тата пахалăхлă хăпартнăшăн тав хучĕсем пачĕç. Çуртпа юнашар çуран çÿрекенсем валли çул сарнă, ача-пăча площадки вырнаçтарнине те асăнса хăвармалла.

Савăнăçлă лару-тăрура хĕрлĕ хăйăва касса çул уçнă хыççăн хваттер уççине тивĕçнĕскерсем хăйсен «тăваткал метрĕсене» курма васкарĕç. Чылай çул баракра пурăннăскерсем таса та çутă пÿлĕмсене пăхса ытараймаççĕ. Кухньăра та, ваннăйĕнче те пур сантехникăна та вырнаçтарнă, кранран сивĕ тата вĕри шыв юхать... Пĕр сăмахпа кĕр те – пурăн!

Светлана Владимирова хăйне пÿрнĕ хваттер уççине çулталăкран иртнĕ мăнукĕпе пĕрле илме килнĕ. Шăпăрлан хĕрлĕ хăю çыхнă уçса алăра вылятса çÿрерĕ. «Упăшка çамрăк чухне монтажпа строительство организацине ĕçлеме вырнаççан баракра пÿлĕм пачĕç, малашне хваттерпе те тивĕçтерме шантарчĕç. Анчах кайран йывăр вăхăтсем пуçланчĕç. Унтанпа хамăн ачасем çитĕнсе мăнуксем те çуралчĕç ĕнтĕ», – тет хĕрарăм çĕнĕ хваттере чĕрĕк ĕмĕре яхăн кĕтме тивни пирки пĕлтерсе.

Ирина Михайлова та телейлисен шутĕнче. Унăн та куçĕсем савăнăçпа тулнă. Алла постановление тытсан хваттере пĕрремĕш хут килсе пăхнине нихăçан та манмасть пуль вăл. «Кухньăна кĕрсен газ плитине ыталарăм та ... макăрса ятăм, тек калаçаймарăм», – аса илет хĕрарăм. – Çĕнĕ хваттере пурăнма куçсанах чи малтанах кукăль пĕçеретĕп тесе шухăшларăм». Шоссейная урамри баракара 22 çул пурăннă вăл. «Хăрушă», – тет Ирина Михайлова авариллĕ тесе йышăннă çуртри пурăнмалли условисемпе кăсăклансан. Шыва урамран йăтнă, «тула каймалли» те çурт тулашĕнче пулнă, шăшисем те чупнă. «Пурте çитет, çитменнине çитерĕпĕр», – теççĕ çĕнĕ хваттер хуçисем ĕмĕт, чылай çул иртсен те, пурнăçланнишĕн хĕпĕртесе.

■ АНЖЕЛИКА ТИХОНОВА

Çĕнĕ хваттер хăтлăрах

КĂСĂКЛĂ

Кÿкеçри Геологическая урамри 7-мĕш çурта çĕклеме 14 млн çурă тенкĕ тăкакланă. Строительство ĕçĕсем кăçалхи февралĕн 28-мĕшĕнче пуçланса августăн 15-мĕшĕнче вĕçленнĕ.

СĂМАХ МАЙ

Райадминистрацин çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх пайĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, граждансене авариллĕ çурт-йĕртен хăтлисене куçарассипе çыхăннă программа ĕçлеме пуçланăранпа 2013-2017 çулсенче Шупашкар районĕнче программăн I тапхăрĕнче 73 çынна нумай хваттерлĕ 15 аварилле çуртран хăтлисене куçарнă, II тапхăрта – 166 çынна нумай хваттерлĕ 4 тата уйрăм 6 çуртран, IV тапхăрта – 51 çынна нумай хваттерлĕ виçĕ çуртран.

Сентябрĕн 10-мĕшĕ – Пĕрлехи сасăлав кунĕ

ЦИФРĂСЕМПЕ ФАКТСЕМ

Шупашкар районĕнче халăхран **6 уйрăм предприниматель** сĕт пуçтарать. Пĕр литр сĕтшĕн 16-ран пуçласа 18-тенкĕ таран параççĕ.

ШУПАШКАР РАЙОННЕ АДМИНИСТРАЦИН ТУХĂÇЛĂ ĔÇĔШĔН 4,159 МЛН ТЕНКĔЛĔХ ГРАНТ УЙĂРСА ПАРАÇÇĔ. Çакăн çинчен калакан хушăва ЧР Министрсен Кабинечĕн председателĕ Иван Моторин алă пусса çирĕплетнĕ. Çакăн умĕн Шупашкар районĕнчи вĕрентӳ сферин ĕçченĕсен августри канашлăвĕнче райадминистраци пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Владимир Димитриев çак укçа-тенке ача сачĕсенче çĕрĕшнĕ, ăшă тытма пăрахнă чӳречесене улăштарма усă курасси çинчен каланăччĕ.

ШУПАШКАР РАЙОНĔНЧЕ ĔНЕРХИ КУН ТĔЛНЕ ТЫРĂ ТАТА ПĂРÇА ЙЫШШИ КУЛЬТУРĂСЕНЕ 8234 га çинчен вырса илнĕ, 22618 тонна тырă çапнă. Талăкне вăтамран 131 га выраççĕ. Муниципалитетра çĕр улмине 12 га çинчен пурĕ 217 тонна пуçтарса илнĕ. Кĕрхи культурăсене палăртнă 4300 га-ран 1701 га акса хăварнă. Кĕрхи çĕртмене 301 га çинче тунă.

КĂÇАЛХИ САКĂР УЙĂХРА РАЙОНТА ВУТ-ÇУЛĂМ 44 хут алхаснă. Пушар Çĕнъял ял тăрăхĕнче (6 тĕслĕх, Шĕнерпуç ял тăрăхĕнче (5), Тутаркасси ял тăрăхĕнче (4), Вăрман-Çĕктер ял тăрăхĕнче (4) ытларах тухни паллă.

СĔНТĔРВĂРРИ ТАТА ШУПАШКАР РАЙОНĔСЕНЧИ ÇАР КОМИССАРИАЧĔ кăçал çĕршыври аслă çар шкулĕсене икĕ муниципалитетран 23 çынна вĕренме янă. Вĕсенчен Шупашкар районĕнчи виçĕ çамрăк пур тĕрĕслев витĕр те тухса вĕренекенсен йышне кĕнĕ. Иртнĕ çул аслă çар шкулне 8 яша илнĕ.

2017 ÇУЛĂН ЯНВАРЬ-ИЮЛЬ УЙĂХĔСЕНЧЕ Шупашкар районĕнче 339 çын çуралнă, 391 çын пурнăçран уйрăлса кайнă. Районта 182 мăшăр çемье çавăрнă, 109 çемье арканнă.

«Симĕс çĕлĕн» инкекĕ

• ЙĂНĂШ ÇУЛПА

Шалти ĕçсен районти уйрăмĕн ĕçченĕсен çын вилни пирки пĕлтерни тăрăх иртнĕ эрнере тăвата хутчен вырăна тухса кĕме тивнĕ. Вĕсенчен иккĕшĕнче эрех-сăра инкек сăлтавĕ пулса тăни паллă. Тунтикунсерен райадминистрацире иртекен планеркăра районти полици уйрăмĕн участковăйсемпе ĕçлекен пайĕн пуçлăхĕн çумĕ Андрей Рябов сăмахĕсем тăрăх, наркăмăшланни те мар, икĕ тĕслĕхре те алкоголе вăрах вăхăт ĕçни çынсен пурнăçне татнă.

Шупашкар районĕнче пурăнакан тепĕр хĕрарăмăн шăпи те сисĕмлĕ кĕрĕвĕ пулман пулсан темле килсе тухĕччĕ-ши – паллă мар. Хĕрарăм çапăçнă, тулашнă, вăйпа лартса кайсан автомобиль чӳречине ватассипе те хăратнă, кĕрĕвĕн ăна больницăна сипленме багажникре илсе килме тивнĕ. Хĕрĕ намăсланнă-ши – пĕрле килмен. Мăнукĕсем те пур ĕçнипе ватăлсаларнă çак «кинемейĕн». Пĕрлех пурăнаççĕ. Тен, тарăхса çитнĕренех арçын ăна алкоголизмран сиплеме шут тытнă.

«Кукамайран та, асаннерен те эрех шăрши кĕнине нихăçан та туйман», – тет Шупашкар район больницинче 33 çул вăй хунă, паян Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ Вячеслав Рафинов. Район больници уншăн тăван кил пекех. Çак çулсенче «симĕс çĕлен» авăрне кĕрсе ӳксе нушаланакан сахал мар çынна курма тивнĕ. Итлеме те. Патшалăх Канашĕнче социаллă ыйтусемпе ĕçлекен Комитета ертсе пынă май инкек патне илсе çитерекен çак чирпе кĕрешессине патшалăх политикин тĕп çул-йĕрĕ пек йышăнать вăл.



Вячеслав РАФИНОВ, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ:

– Урăлăх кунĕ кирлĕ – çакăнпа православи чиркĕвĕ ĕмĕр каяллах килĕшнĕ. Халăх эрех-сăрапа иртĕхесси патне çитесрен ун чухнех хăранă. 2014 çулта Раççей çыннисем çулталăкра 3-4 литр алкоголь ĕçнĕ пулсан, халĕ вара кашни çын – тин çуралнисем те çак шутах кĕреççĕ – пуçне тивекен кăтарту 18 литра çитни пирки калаççĕ. Инкек мар-и çакă? Православи тĕнĕ пуçĕнче тăракансем ăслă пулнă: алкоголь ним ыррине те кӳмессе вĕсем лайăх пĕлнĕ. Пушшех те – ĕçкĕпе иртĕхекенсен ачисем чирлĕ çуралаççĕ, вĕсем хăйсен пепкисене тивĕçлĕ воспитани парассишĕн тăрăшмаççĕ. Ашшĕ-амăшĕн юратăвне туймасăр çитĕнекенскерсем хăйсем те çак киревсĕр йăлана хирĕç тăма хал çитереймеççĕ.

Енчен те паллакан çын, кӳршĕ эрех-сăра авăрне кĕрсе ӳкнине сиссен çак инкекпе ăна ниепле те куçа-куçăн хăварма юрамасть.

Мускав тата Пĕтĕм Раççей патриархĕ **КИРИЛЛ:**

– Урăлăх кунĕшĕн çак куна пĕрре те ăнсăртран суйламан. Евангелирен эпир «тĕрĕс тата сăваплă ара» хăйне упранă, итлесе уншăн пĕтĕмпех тунă Ирод ăссăрăн тата чунсăррăн вĕлернине пĕлетпĕр. Анчах та мухмăрла савăнăçран хăпаймасăр, чиперккесен хӳхĕм ташшине ытараймасăр патша хĕрарăмăн каварлă шухăшĕнчен иртеймен: Турă чурин пуçне касса пăрахнă.

Эрех ĕçсе арпашăннă ăс-тăн çынсене преступлени, ăссăрла утăмсем тума хистет.

Халăх эрех-сăра патне туртăнас сиенлĕ йăлана пӳлессине çак кунсенче Патшалăх Канашĕн председателĕ Валерий Филимонов, социаллă ыйтусемпе ĕçлекен комитет председателĕ Вячеслав Рафинов ертсе пынипе экспертсене явăçтарса иртнĕ çавра сĕтелте сӳтсе явнă. Шупашкар Епархийĕн чиркӳ ыркăмăллăхĕпе социаллă ĕç-хĕл пайĕн ĕçченĕ – урăлăха çирĕплетессин координаторĕ Андрей Лапин, И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн медицина наукисен тухтăрĕ Сергей Смелов – вĕсем пурте çак сиенлĕ йăласене хирĕç. Тĕл пулу Урăлăх кунĕ умĕн иртни уйрăм пĕлтерĕшлĕ: Шупашкар православи уявĕ тĕлне хĕреслĕ çула тухма хатĕрленет. Çак мура хирĕç тăракан пĕтĕм йышпа республика конференцийĕ иртĕ. Ăна та çак кунах халлаççĕ.

→4

ПĔЛЕТĔР-И ЭСИР?

1914 çулта Православи чиркĕвĕ Иоанн Предтечи Пророк пуçне каснă кун Пĕтĕм Раççейри урăлăх кунне паллă тума йышăннă. Çĕнĕ стильпе ку кун сентябрĕн 11-мĕшĕпе тӳр килет. Раççейре çак кун пур эрех лавккин алăкĕ те хупă пулнă, ăна ниçта та сутман. Иоанн Крестителе асăнса, наркоманипе, алкоголизмпа чирлĕ çынсемшĕн çăлăнăç ыйтса çак кун чиркӳсенче кĕлĕ вуланă. Кăмăл тунă кашни çын эрех-сăрапа иртĕхнишĕн ӳкĕнсе çак кун священник пилĕпе урă пурăнма тупа тума пултарнă. Вырăс православи чиркĕвĕн Сăваплă Синочĕ Урăлăх кунне паллă тăвассине 2014 çулта тепĕр хут тавăрнă.

Манăçнă ĕç вăйĕ çук

сывлăх енчен хăйне евĕрлĕ çынсем тăрăшсан ыттисенчен кая мар тупăш илеççĕ

• ХӲТЛĔХ

Сывлăх енчен хавшак çынсенче паян патшалăх ĕç вăйне курать. Чи пĕлтерĕшли – инвалидсен пурнăçра хăйсен вырăнне тупас кăмăл пурри. Вăйпа пурнăçламалли ĕçсенчен чылайăшне ăс-тăнпа шухăшласа тумаллисемпе ылмаштарни, хальхи технологисем пурнăçа кĕрсе пыни кунта пулăшу кӳчĕ çеç. Сывлăх енчен хавшакрах çынсене ĕçе вырнаçтарма çĕршыв субъекчĕсенче ятарлă программăсем йышăннă, çав шутра республикăра та. Шупашкар районĕнче инвалидсене ĕçе вырнаçтарассипе çыхăннă лару-тăру еплерех-ха? Унпа муниципалитетри халăха ĕçпе тивĕçтерекен центр директорĕ Олег АЛЕКСАНДРОВ паллаштарчĕ.

– Олег Иванович, Шупашкар районĕнче ĕçлеме пултаракан миçе инвалид?

– Социаллă служба даннăйĕсем тăрăх, Шупашкар районĕнче паянхи кун тĕлне 3,5 пин ытла инвалид пурăнать, вĕсенчен 30% ытла ĕçлеме пултаракан çул ӳсĕмĕнчисем. 2017 çулхи сакăр уйăхра халăха ĕçпе тивĕçтерекен центра ĕç шыраса сывлăх енчен хавшак 57 çын (пĕлтĕр – 59) пынă. Учреждени пулăшнипе 43-шĕ тĕрлĕ предприятие тата организацие ĕçлеме вырнаçнă. Пĕлтĕр ун пеккисем 35-ĕн пулнă. Центра пынă инвалидсен 73,6% ĕçпе тивĕçтернĕ, çулталăкне вара планпа килĕшӳллĕн ку кăтарту 63% кая мар пулмалла.

– Вĕсене ĕç тупма пулăшатăр-и?

– Сывлăх енчен хавшакрах çынна ăна килĕшекен ĕç тупма пулăшмашкăн кашнинпе уйрăммăн калаçатпăр. Ял тăрăхĕсене тухса çӳресе инвалидсемпе тĕл пулатпăр, телефонпа та çыхăну тытатпăр...

– Ĕçе тивĕçтерессинче мĕнле йывăрлăхсем сиксе тухаççĕ?

– Калаçусене тишкерни тăрăх тĕп сăлтавсен шутне ĕç паракан инвалидшăн меллĕ ĕç условийĕсем çукки, сывлăх енчен хавшакрах çынсемпе ыттисенчен уйрăлса тăракан ĕç килĕшĕвĕ тума, ĕç вырăнĕ йĕркелеме тивнипе чылай предприятире çакна хатĕр мар. Сывлăх енчен хавшак çын ĕçре суранлансан явап тыма тивнишĕн хărани те сисĕнет. Ĕç сĕнекенсен базинче вахтер, лифтер, гардеробщик вакансийĕсем çукпа пĕрех. Инвалидсем вара шăпах çак ĕçсенче тăрăшасшăн. Транспорт ыйтăвĕ те çивĕч. Предприятие çитме чылай чухне меллĕ мар. Акă, сăмахран, Вăрман-Çĕктерте инвалид валли ĕç вырăнĕ пур, Кӳкеçре çав специальноçра тăрăшма пултаракан çын унта çӳресшĕн мар – кансĕр. Ĕçе вырнаçсан инвалидлăхран кăларасран хăрани, ĕçлес килменни те палăраççĕ.

– Инвалидсен пĕтĕм йышĕнчен миçемĕш пайне ĕçе вырнаçтармалла сирĕн?

– Кашни уйăхра пенси фончĕ ĕçлеме пултаракан сывлăх енчен хавшакрах çынсен списокне тăрататать, вĕсенчен 35% ĕçпе тивĕçтермелле. 2020 çул тĕлне Раççей Президенчĕ пирĕн ума ĕçлеме пултаракан инвалидсене çурринчен кая мар ĕçе вырнаçтарма тĕллев лартнă. Сывлăх енчен хавшак çынсем хăйсемшĕн укçа ĕçлесе илнипе пĕрлех обществăна та усă пама пултараççĕ-çке.

– Ĕçпе тивĕçтерме пачах май çуккисем пур-и?

– Айăплав вăхăтне тĕрмере иртерекен, интернат учрежденийĕсенче пурăнакан, çавăн пекех 1-мĕш ушкăнри инвалидсене ĕçлеме илме кăтартусем çук. Районта куç япăх курнипе инвалидлăх илнĕ икĕ çын ĕçлеме пултараççĕ. Сăмах май, муниципалитетра 1-мĕш ушкăнри 178 инвалид пурăнать, 2-мĕш ушкăнри – 393 çын, 3-мĕш ушкăнри – 700 çын, пĕлӳ илекенсем – 16, интернатсенче пурăнакансем – 157, 335 çыннăн сывлăхне кура ĕçлеме юрамасть, 50 инвалид тĕрмере ларать.

– Инвалидсене ĕçе вырнаçма пулăшакан программăсем çинче тĕплĕнрех чарăнса тăрар-ха...

– 2012-2020 çулсенче граждансене ĕçе вырнаçма пулăшмалли çинчен калакан республикăн тĕллевлĕ программипе 7 инвалида вăхăтлăх ĕçе вырнаçтарнă, кашни уйăхра укçа-тенкĕпе пулăшнă. Каярах вĕсем унтах малалла вăй хума юлнă. Çак программăпа 5 инвалид професси – уйрăм хуралçă, газ оборудованине юсакан, кадрсен специалисчĕ, лифтер – илнĕ. Сывлăх енчен хавшак пĕр çынна хăйĕн ĕçне уçма субсиди уйăрса панă, вăл атă-пушмак юсассипе мастерской уçнă.

Кăçал халăха ĕçпе тивĕçтерекен центр çамрăк (44 çултан çамрăкрах) инвалидсен стажировкишĕн тăкаксене саплаштарнă. Сывлăх енчен хавшакрах пĕр çынна уйрăм хурал предприятине малтанласа пĕлӳ илнĕ хыççăн хуралçăна вырнаçтарнă. Инвалидпа irtternĕ 3 уйăхлăх стажировкăшăн наставнике ĕç укçин чи пĕчĕк виçи чухлĕ хушса тӳлетпĕр.

«Суккăр инвалидсене ĕçе вырнаçтарасси» тĕллевлĕ программăпа 2011-2015 çулсенче 41 ĕç вырăнĕ йĕркеленĕ. Унта хутшăнакан предприятисене ятарлă ĕç вырăнĕ хатĕрлеме, çыннăн инвалидлăхне тата çул ӳсĕмне кура, 50 пин тенкĕрен пуçласа 80 пин тенкĕ таран уйăрса панă. Паянхи куна 12 ваканси пур.

– Квотăллă вырăнсем çинчен те каласа хăвармалла...

– Минстрсен Кабинечĕн кашни çул йышăнакан постановленийĕпе килĕшӳллĕн, пысăк предприятисенче тата организацисенче инвалидсем валли ятарлă ĕç вырăнĕсем йĕркелемелле. Районта çакăн пек 16 ваканси пулмалла, хальлĕхе «Юрма» агрохолдингра тата «Атлашевский» СХКра икĕ вырăн пур. Кăçал 35-100 ытла ĕçлекен 49, 100 çын ытларах ĕçлекен 14 предприятипе организацин квота çинчен калакан законодательствăна пурнăçламалла. Сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 63 организацирен 15-шĕ квотăна тултарайман.

– Çакăнпа çыхăннă саккун çирĕпленесси пирки калаççĕ...

– 2018 çулта квотăна пурнăçланине тĕрĕслесси вăйланать. Кăçал икĕ организацие тĕрĕсленĕ пулсан, çитес çул ЧР ĕç министерстви çак енĕпе ĕçе 5 хут вăйлатма шантарать. Ял тăрăх пуçлăхĕсен инвалидсене вăхăтлăх ĕçе те пулин вырнаçтармалла. 3-мĕш ушкăн инваличĕсем çăмăллатнă ĕçре тăрăшма пултараççĕ. Платникре, сантехникре хушма кану валли вăхăт уйăрса ĕçлееççĕ. Сывлăх енчен хавшакрах çынсене ĕç паракансен пушă вырăнĕсем çинчен сайтсенчен кăна мар, ял тăрăхĕсене тухса çӳресе те пĕлтермелле.

АНЖЕЛИКА ТИХОНОВА

СĂМАХ МАЙ

Шупашкар районĕнче ĕçлеме пултаран 1304 инвалид, вĕсенчен 20% ĕçпе тивĕçтернĕ.

Унӑн букварӗпе çитӗннӗ

• ВӖРЕНТӲ

Кӳкеçре пулсан яланах тенӗ пек район музейне кӗрсе тухатӑп. Июнӗн 22-мӗшӗнче те çитрӗм унта. Хаяр вӑрçӑ пуçланнӑранпа кӑçал 76 çул. Мана хирӗç алӑкран тухакан шкул ачисен пысӑк ушкӑнӗ музейра хӑйсем курнине хӗрӳллӗн сӳтсе яватчӗç. Музей ӗçченӗсем Анастасия Даниловӑпа Оксана Ижедерова хапӑл туса кӗтсе илчӗç. Куракан кунта астӑвӑм кунӗсенче уйрӑмах йышлӑ.

К. Михайлов

Районта вӑй хунӑ учительсене халалланӑ уйрӑм енелле çул тытрӑм эпӗ. Кунта РСФСР шкулӗн тава тивӗçлӗ учителӗн ятне тивӗçнӗ Юрий Егорович Маркова (Иккасси), Константин Афанасьевич Афанасьева (Куснар), Ленин орденӗн кавалерне Василий Сергеевич Сергеева (Апаш), Василий Ефимович Ефимова (Ильпеш) халалланӑ стендсем пур. Вӗсемпе юнашарах Платка ялӗнчи шкулта 40 çула яхӑн вӑй хунӑ Кесарий Михайлович Михайлов сӑн ӳкерчӗкӗсене вырнаçтарнӑ. Ырӑ кӑмӑллӑ, пур енчен те тарават çак çынна 1953-1954 çулсенче, хӑй Кӳкеçре вӗреннӗ вӑхӑтра тӗл пулкаланӑ. Ку вӑхӑтра вӑл РОНО инспекторӗнче ӗçленӗ пулнӑ.

Кесарий Михайлов тӑван ялӗнчи, Иккассинчи шкула вӗренсе пӗтерсен Шупашкарти учительсене хатӗрлекен училище çул тытать. Алла диплом илсен Çатра-Хочехмат шкулӗнче ӗçлеме тытӑнать. Хаяр вӑрçӑ пуçлансан салтак тумне тӑхӑнать. 1338-мӗш гварди дивизине лекет. Тӑшмана хӑваласа Белоруç, Литва, Латви халӑхне ирӗке кӑларать. Çӗнтерӳ кунне вара нимӗç çӗрӗ çинче кӗтсе илет. «Хӗрлӗ çӑлтӑр» орденӗпе, икӗ хутчен «Хастарлӑхшӑн» медале тивӗçнӗ паттӑр тӑван яла таврӑнать. Çатра-Хочехмат шкулӗнче ӗçе малалла тӑсать. 1953 çулта ӑна РОНО инспекторӗ пулма сӗнеççӗ. Шкулсенче час-часах пулса çамрӑк учительсене пур енчен те пулӑшма тӑрӑшать. Часах парти райкомӗ ӑна тӑван ялти «Хӗрлӗ Ялав» колхоза ертсе пыма лартать. Хуçалӑх экономикине ура çине тӑратма сахал мар вӑй хурать вӑл. Вӑл вӑхӑт тӗлне шкул çурчӗ самаях кивелсе кайнӑ. Кунта вӗрентӳ ӗçне тӑсма тӑрӑшуллӑ çын кирлӗ пулнӑ. Çак ӗçе шӑпах Кесарий Михайловича шанаççӗ те. Çакӑн хыççӑнах шкул çурчӗ çӗнелсе пырать, вӗрентӳ участокӗ те йӗркене кӗрет. Шкул ачисен художество коллективне йӗркелесе ярать.

Иртнӗ ӗмӗрӗн 60-мӗш çулӗсем пуçланнӑ тӗле Чӑваш вӗрентӳ ӗç министерстви Кесарий Михайловича чӑваш шкулӗсен 1-мӗш класӗ валли вырӑсла «Букварь» хатӗрлеме сӗнет. Унпа усӑ курма, ял учителӗсем валли мӑшӑрӗпе Анастасия Егоровнӑпа темиçе пособи çырса хатӗрлеççӗ. 1957 çулта Кесарий Михайлович «Вӗрентӳ ӗçӗн отличникӗ» ята, мӑшӑрӗ тав хутне тивӗçеççӗ. Вӗсем иккӗшӗ те пуçламӑш шкулсенче вӑй хуракан учительсем валли усӑ уроксем сахал мар ирттернӗ.

Платкари шкултан вӗренсе тухнӑ çӗршер çамрӑк паян – учитель, врач, çар çынни, наука ӗçченӗ. Çак ялти Юрий Данилов «РСФСР тава тивӗçлӗ строителӗ», Иван Геннадьев «РСФСР тава тивӗçлӗ артисчӗ» ята тивӗçнӗ.

Чӑваш АССРӗн шкулӗн тава тивӗçлӗ учителӗ Кесарий Михайлович яланах çывӑх ялсенчи халӑх чӗринче.

ЛЕОНИД ПАВЛОВ, ЧӐРӐШКАССИ

ШУПАШКАРТАН – САРӐ ТУ ТӐРӐХНЕ

• ÇУЛ ÇӲРЕВ

Вӗçӗ. Пуçламӑшӗ иртнӗ номерте.

Севастопольти Чӑваш культурин кунӗ

Июлӗн 31-мӗшӗнче ентешсен Керчь проливӗпе пырса «Кавказ» портри тӗрӗслев витӗр тухнӑ автобусӗ паромпа Крым енне каçнӑ. 2500 км хыçа хӑварса Хура тинӗс хӗрринчи Любимовка поселокӗ çывӑхӗнче палатка лагерь туса вырнаçнӑ. Ушкӑнра Николайпа Ирина Бахмисовсен чи пӗчӗк çулçӳревçисем 5-пе 6 çулти ывӑлӗсем те пулнӑ. Ентешсене Крымри чӑвашсен автономийӗн ертӳçи Андрей Яковлев хапӑл туса кӗтсе илнӗ. Августӑн 1-мӗшӗпе 2-мӗш кунӗсенче чун çӳревçӗсем хура тинӗс хӗрринче каннӑ, Бахчисарайри историллӗ вырӑнсене çитсе курнӑ. Тепӗр кунне Севастополь хулинчен 5 ентеш килсе çитнӗ. Чӑваш юрри-кӗвви каллех Хура тинӗс хӗррипе шӑранса юхнӑ. Олег Цыпленков хӑнасене парнесемпе чысланӑ. Августӑн 4-мӗшӗнче Андрей Яковлев Чӑваш делегацине Севастополь хулипе паллаштарнӑ. Унтан пурте Севастополе хӳтӗлесе пуç хунӑ паттӑрсене асӑнса лартнӑ мемориал палӑк умӗнчи Ӗмӗрлӗх çулӑм умне чечек çыххисем хунӑ. Каç енне 16 сехетре Нахимов лапамӗнчи Приморский бульварӗн сцени çинче Чӑваш культурин кунӗ иртнӗ. Унта маларах асӑннӑ пултарулӑх ушкӑнӗсемпе юрăççем Севастополь çыннисене хӑйсен пултарулӑхӗпе савӑнтарнӑ. Куракансем кӑçал та чӑвашсен пултарулӑхне хапӑл туса йышӑннӑ, 2 сехете тӑсӑлнӑ концерт пурне те килӗшнӗ. Андрей Яковлев унта хутшӑннисене тав хучӗсемпе чысланӑ. Каçхине, çул çӳревçӗсем Севастополь хулипе, Хура тинӗспе сыв пуллашса каялла çула тухнӑ. Олег Цыпленков пӗлтернӗ тӑрӑх, çитес 2018 çулхи июль уйӑхӗнче иртекен 30-мӗш чун çӳрев Байкал кӳлли хӗррине выртӗ.

НИКОЛАЙ СМИРНОВ, АТӐЛЪЯЛ

• ШУПАШКАР РАЙОННЕ – 90 ÇУЛ

Тивӗçлӗ канури К.И. Кузнецова Çатракассинчи вӑтам шкулта тӑван тавралӑх культурине халалланӑ каçра. 1994 çулхи мартӑн 18-мӗшӗ. В. Николаев сӑн ӳкерчӗкӗ.

«Симӗс çӗлӗн» инкекӗ

• ЙӐНӐШ ÇУЛПА

⮐ 1 Эрех ӗçсен паттӑр пек

Шухӑша ярӗ-и çамрӑксене, амӑшӗсене çак тӳнтерле тӗслӗх – сӳтсе явма кашнин хӑйӗн ирӗкӗ. Анчах та райадминистраци çумӗнчи çул çитменнисем преступлени тӑвассине пӳлес енӗпе ӗçлекен комиссие сӑлтавсӑр чӗнтермеççӗ.

Çӗньял ял тӑрӑхӗнче пурӑнакан хӗрӗн ун умӗнче пӗрремӗш хут кӑна мар тӳрре тухма тивет. Тӑватӑ çул каялла вӑл уроксене сӑлтавсӑр сиктернӗшӗн питне хӗретнӗччӗ, кӑçалхи апрель уйӑхӗнче – обществӑлла вырӑнта ӳсӗр çӳренӗшӗн. Хӑйӗн йӗркесӗрлӗхӗшӗн мухтаннӑ пек пулса мӑн кӑмӑллӑн, аллисене пӗрре куртка кӗсйине чикрӗ, тепре хӗреслесе тытрӗ.

Августӑн 19-мӗшӗнче çул çитменнисемпе ӗçлекен инспекторсем ӑна ӳсӗрле тытса чарнӑ. Урам тӑрӑх тайкаланса утнӑ, çӑварӗнчен эрех-сӑра шӑрши кӗнӗ. Нумаях пулмасть 17 çул тултарнӑскер тӑватӑ стакан сӑра тата икӗ стакан джин-тоник пушатнӑ иккен. Ӗçсе ӳсӗрӗлнӗ те пӗр çуртра пурӑнакан хӗрарӑма тапӑннӑ: çӳçӗнчен ярса тытса урипе хырӑмӗнчен тапма хӑтланнӑ, сылтӑм куçне суранлатнӑ. Эрех-сӑрапа туслашнинче нимӗн те япӑххи çук тесе шухӑшлать çамрӑк. Нарколог патӗнче халех учетра тӑрать вӑл. Çынна хӗненӗшӗн унӑн РФ КоАПӗн 6.1.1. статйипе 5 пин тенкӗрен пуçласа 30 пин тенкӗ, обществӑлла вырӑнта ӳсӗр çӳренӗшӗн 500 тенкӗрен пуçласа 1500 тенкӗ таран штраф тӳлеме тивни çинчен илтсен кӑна хӗр аллисене куртка кӗсйинчен кӑларчӗ. Çул çитмен çамрӑкӑн амӑшӗ те ниçта та ӗçлемест иккен. Ку киле иленнӗ «симӗс çӗлен» тата мӗнле инкек кӑтартӗ – калама хӗн.

МИЛЕНА СЕРГЕЕВА, ТАТЬЯНА МАЙОРОВА

09-02. ИЗВЕЩЕНИЕ О ПРОВЕДЕНИИ СОБРАНИЯ О СОГЛАСОВАНИИ МЕСТОПОЛОЖЕНИЯ ГРАНИЦ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА

Кадастровым инженером Платоновым Русланом Васильевичем, почтовый адрес: 428005, Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары, ул. Островского, д. 30, адрес электронной почты zemetra@inbox.ru, контактный телефон 8-960-302-73-23, выполняются кадастровые работы по уточнению местоположения границ и площади земельного участка с кадастровым номером 21:21:170502:32, расположенного по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, Чебоксарский район, Шинерпосинское сельское поселение, д. Большое Князь-Теняково, ул. Водолеева, д. 6

Заказчиком кадастровых работ является: Черкунов Александр Сергеевич почтовый адрес: 428018, Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары, ул. Герцена, д. 4, кв. 40, контактный телефон: 8(8352)58-01-34.

Собрание заинтересованных лиц по поводу согласования местоположения границы земельного участка состоится по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, Чебоксарский район, Шинерпосинское сельское поселение, д. Большое Князь-Теняково, ул. Водолеева, д. 6 9 октября 2017 г. в 10-00 часов.

С проектом межевого плана земельного участка можно ознакомиться по адресу: 428018, Чувашская Республика, г. Чебоксары, Московский проспект, д. 39, корпус 1.

Возражения по проекту межевого плана и требования о проведении согласования местоположения границы земельного участка на местности принимаются с 8 сентября 2017 г. по 25 сентября 2017 г. по адресу: 428005, Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары, ул. Островского, д. 30.

Смежный земельный участок, с правообладателем которого требуется согласовать местоположение границ: земельный участок с кадастровым номером 21:21:170502:31, расположенный по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, Чебоксарский район, Шинерпосинское сельское поселение, д. Большое Князь-Теняково, ул. Водолеева, д. 5.

При проведении согласования местоположения границ при себе необходимо иметь документ, удостоверяющий личность, а также документы о правах на земельный участок.

• ДЕЛА МЕСТНЫЕ

Вода камень точит

Вопрос обеспечения теплоснабжением и горячей водой жителей п. Сюктерка Чебоксарского района обсуждался 31 августа на встрече заместителя Председателя Государственного Совета ЧР Альбины Егоровой с главой Вурман-Сюктерского сельского поселения Чебоксарского района Олегом Ермановым.

Также в обсуждении участвовала руководитель Государственной службы ЧР по конкурентной политике и тарифам Марина Кадилова. Этот вопрос находился на постоянном контроле у депутата. Было отмечено, что за последние два года здесь сделано очень много: реконструированы котлы в котельной, сети теплотрассы, администрация сельского поселения полностью зарегистрировала эту систему в собственность. Кроме этого объявлен аукцион для подбора подрядчика или организации для обслуживания этих объектов.

Олег Ерманов получил подробные консультации для осуществления дальнейших работ, в частности, по установлению норматива потерь в сетях, а также представлению пакета документов для установления тарифов в определенные сроки.

Праздник села

2 сентября в селе Ишлеи состоялся День села. Возле здания Ишлейского райпо развернулась праздничная площадка, где работали торговая ярмарка, различные аттракционы.

На празднике присутствовали и.о. главы администрации Чебоксарского района Владимир Димитриев и и.о. директора Центральной клубной системы Любовь Виноградова.

Мероприятие началось с волейбольного матча команд сельского поселения. Возле Дома творчества развернулись состязания по настольному теннису, армрестлингу, гиревому спорту, дартсу. На торжественной церемонии чествовали тружеников села, самых юных и старейших жителей, народных умельцев и многих других отличившихся односельчан.

Музыкальным подарком для гостей стали выступления звезд чувашской эстрады.

Задумок много

Житель д. Малое Камаево Мариинско-Посадского района Вениамин Смелов практически каждый вечер выезжает на репетиции в Чебоксарский район. Он является руководителем трех ансамблей в д. Ердово, д. Ураево-Магазь и д. Липово Атлашевского сельского поселения.

Будучи по профессии филологом, гармонист-баянист пишет для художественных коллективов песни, исполняя которые они срывают у зрителей овации.

Самую большую популярность приобрела песня «Бурановских бабушек», исполненная ими на конкурсе «Евровидение», которую Вениамин Васильевич перевел на чувашский язык для ансамбля Ураево-Магазьского клуба «Сарнар». Есть у музыканта и другие задумки: он хочет перевести задорные латиноамериканские песни на родной язык. «Самое большое препятствие для меня – это расстояние, практически вся моя зарплата уходит на бензин, лишь бы еще машина не подвела. Дальше всего находится д. Липово. Однако когда я начинаю репетицию, вся рутина, все неурядицы уходят на второй план», – делится мужчина.

В каждом из нас живет творец

ШупашкАRT

В честь двух знаменательных дат Чебоксарского района – юбилеев газеты «Тӑван Ен» и муниципалитета – хочется поделиться с читателями историей создания гимна района и песни, посвященной нашему изданию. Когда же они появились и кем были написаны?

С ансамблем «Медичка»

Фото из личного архива

В пионерском лагере

ДОСЬЕ

Владимир Гурьевич ФЕДОРОВ – композитор, педагог, баянист с более чем 40-летним стажем.

Место рождения: 24 мая 1950 года в селе Советское Ядринского района Чувашской Республики в семье служащих.

Образование: детская музыкальная школа по классу баяна, Чебоксарское музыкальное училище им. Ф. Павлова, музыкально-педагогический факультет ЧГПУ им. И.Я. Яковлева.

Трудовая деятельность: преподаватель в Городищенском музыкально-педагогическом училище Пензенской области (1971–1972 гг.), преподаватель класса баяна в Кугесьской детской музыкальной школе (1973 – 2014 гг.).

Звания: член ассоциации композиторов ЧР. Заслуженный работник культуры ЧР. Заслуженный деятель Чувашского музыкального общества.

Автором замечательных произведений является известный человек Чебоксарского района Владимир Федоров, который рассказал об истории их создания, о своей жизни и музыкальной деятельности.

– Владимир Гурьевич, вы – музыкант с большим стажем, расскажите, как рождается песня? Нам, людям далеким от этого процесса, очень интересно – для этого нужно как-то настроиться, может, уединиться или выбрать определенное время?

– Прежде всего для написания музыки нужен богатый опыт. Я благодарен судьбе за то, что она свела меня в годы учебы с такими талантливыми людьми, как Федор Васильев, Аристарх Орлов-Шузьм, Тимофей Фандеев и другие. Как только в руках появляется интересный текст песни, ты садишься, читаешь и вникаешь в его смысл. Далее, что бы ты не делал, идет творческий процесс. Потом садишься и записываешь ноты на бумагу. Рождается первая фраза, вторая, третья и так далее... Для этого нужно определенное время и состояние души. Ведь в каждом из нас живет творец. Родилась музыка, и ее нужно записать.

– Поделитесь, как и когда родилась песня, посвященная нашей газете?

– В преддверии одного из юбилеев любимой газеты «Тӑван Ен» главный редактор Геннадий Егоров пригласил нас с поэтессой Алиной Николаевой в редакцию и предложил создать песню. Мы согласились. Через некоторое время родилась замечательная песня, которую с удовольствием спели на торжестве в честь вашего издания. Помню, пели даже зрители в зале.

– А гимн нашего муниципалитета?

– Как сейчас помню, готовились к 70-летию Чебоксарского района. В связи с этим шла активная работа по созданию символики – гимна и герба. Эту задачу перед нами поставил председатель исполкома Ростислав Данилов. Нас собрали в администрации и объяснили фронт работ. Слова писала Алина Николаева, а я – музыку. Написать нужно было три варианта: для сводного хора, солиста и для оркестра. Я с этой задачей справился, выполнил в срок. Сегодня они хранятся в архиве звуковой студии районного Дома культуры.

– Тяга к музыке появилась еще в детстве?

– Нас в семье было трое: две сестры и я. Помню, как отец приобрел аккордеон и принес его домой. Мы понемногу стали его осваивать. Тогда отец пригласил в гости нашего родственника, преподавателя музыкального училища Валентина Орлова, и попросил проверить, есть ли у нас музыкальные способности. Прослушав нас с сестрами, он сказал, что слух есть.

Помню, однажды к нам в дом пожаловал известный музыкант Тимофей Фандеев. Оказывается, он проходил мимо и услышал из окон звучание аккордеона, поэтому решил заглянуть. Он взял в руки инструмент и заиграл, именно тогда я для себя определил, что музыка мне очень интересна.

– Как дальше сложилась ваша судьба?

– В 1958 году наша семья переехала в Кугеси, и с тех пор вся моя жизнь стала связана с этим поселком. Учился я в школе № 1, там же приобрели знания и трое моих сыновей, теперь и внук ходит туда же. За хорошую успеваемость и активное участие в общественной жизни школы в 13 лет меня отправили в «Артек». Одна девочка из Армении пришла в наш отряд и сказала, что хотела бы исполнить армянский танец, но у нее нет аккомпаниатора. Баян в лагере был, и я решился ей помочь. Она мне напела мотив, и мы выступили перед публикой. Мелодию помню до сих пор. В 1978 году я пришел к Федору Васильеву, который на тот момент являлся консультантом Союза композиторов ЧР, и осмелился показать свою песню на стихи Людмилы Савельевой. Он послушал и сказал, надо заниматься и развиваться дальше. С тех самых пор, мне тогда было 28 лет, я серьезно взялся за творчество.

– Вы вели с детьми музыкальные кружки в Центре детского творчества. Как среди множества учеников можно определить талантливого ребенка?

– У каждого человека свои способности, главное, их вовремя выявить. Приходит ко мне ребенок, я простукиваю какой-нибудь ритмический рисунок, он должен его повторить. Затем я пропою фразу либо проиграю на музыкальном инструменте, он снова должен повторить. Однако даже я, опытный педагог, смогу определить слух ребенка только через месяц после общения с ним. Как-то одна женщина привела свое чадо ко мне и говорит: «У моего сына нет слуха, чувства ритма, но мне хочется, чтобы он обучался музыке». Через некоторое время оказалось, что у этого ребенка удивительный слух и редчайший голос.

– Ваши дети пошли по вашим стопам?

– Все трое моих сыновей закончили музыкальную школу. Но я не ставил перед собой цели, чтобы они получили профессиональное музыкальное образование. Дело в том, что музыка постоянно заставляет думать. Она делает людей добрыми, мудрыми и жизнерадостными.

– Более 30 лет вы руководили хором ветеранов.

– В этот хор меня пригласили в 1985 году. 11 января мы встретились с коллективом, а через несколько дней нас уже записывали на телевидении. В течение этих лет мы исполнили более 750 концертов, получили звание «народного хора». Я очень счастлив, что все это время общался с такими талантливыми и интересными людьми. Также под моим руководством коллектив «Медичка» Центральной районной больницы успешно выступал на различных мероприятиях и конкурсах.

– Спасибо за интервью, Владимир Гурьевич.

ЕЛЕНА ДАДЮКОВА

• ВОПРОС-ОТВЕТ

Бить или не бить?

В последнее время участились случаи обращения граждан в отдел полиции о возбуждении уголовного дела в отношении близких родственников по факту нанесения им побоев. По действующему законодательству органы дознания вправе возбудить уголовное дело при определенных условиях и только с согласия прокурора. Могут ли сами граждане напрямую обратиться в суд по факту нанесения им побоев, не обращаясь в правоохранительные органы? Какая ответственность предусмотрена за нанесение побоев?

И. ПЕТРОВ, Кугеси

Илья ГАВРИЛОВ, старший помощник прокурора Чебоксарского района:

– Граждане могут обратиться в суд с заявлением и выступать в суде в качестве частного обвинителя. Уголовные дела о преступлении указанной выше категории возбуждаются в отношении конкретного лица путем подачи потерпевшим заявления в суд.

Заявление должно содержать: наименование суда, в который оно подается; описание события преступления, места, времени, а также обстоятельств его совершения; просьбу, адресованную суду, о принятии уголовного дела к производству; данные о потерпевшем, а также о документах, удостоверяющих его личность; данные о лице, привлекаемом к уголовной ответственности; список свидетелей, которых необходимо вызвать в суд; подпись лица, его подавшего.

